27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАЙ
16
ЫТЛАРИКУН
96(6591) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ферма сумĕнчи участоксем кашни колхозрах пулмалла

Республикăри нумай колхозсем тĕштырăсене çак кунсенче акса пĕтерессĕ. Халĕ ĕнтĕ каярах акакан тырăсене акас, çĕрулми лартас тата техникăллă культурăсем акас хĕрÿ ĕç пуçланса каять. Çак вăхăтрах ферма çумĕнчи участоксене акас ĕçе те пикенмелле, ку ĕçе пĕтĕмпех ферма работникĕсен вăйĕпе тумалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, кашни колхозрах, фермăсем сывăхĕнчи вырăнсенче, 3—5-шер гектар çĕр лаптăкĕ çинче фермăри выльăхсем валли тымар-çимĕç, çĕрулми тата ытти культурăсем акса хăвармалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ферма çумĕнчи участоксем пысăк усă кÿнине нумай колхозсенчи тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра 5 гектар выльăх кăшманĕ акнă, кашни гектартан 700-шер центнер кăшман пухса илнĕ. Çакă вара выльăхсене хĕл касиччченех сĕткенлĕ апатпа тăрантма май панă. Анчах чылай районсенчи колхозсем, тымар-çимĕç акманнипе пула, иртнĕ çул выльăх апачĕ тĕлĕшпе пысăк йывăрлăхсем чăтса ирттерчĕç.

Çавăнпа та ферма çумĕнче участоксем уйăрса акас ĕç питĕ пысăк вырăн йышăннине пурнишĕн те паллă пулмалла, иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал пĕр колхозăн та тумалла мар, ферма çумĕнчи участоксене халех уйăрмалла.

Вăрмар, Çĕрпÿ, Шăхасан, Вăрнар районĕсенче кун пирки чылай паллă ĕçсем тунă. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозри (председателĕ И. Григорьев юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем ферма çумĕнчи участокĕнче хăйсен вăйĕпе акса хăвараççĕ, вĕсем 6 гектар çĕрулми, 0,5 гектар выльăх кăшманĕ, 0,5 гектар кавăн тата кишĕр, 2,5 гектар хĕвелçаврăнăш, пĕр гектар вир, симĕсле ситерме тата силос хывма 10 гектар викăпа сĕлĕ акма йышăннă. Ферма çумĕнчи участокра халĕ хĕрсех ĕçлеççĕ, пур ĕçе те ферма заведующийĕ Тимофеев юлташ ертсе пырать. Ферма участокĕ çине 300 лав тислĕк тата 140 центнер минераллă удобрени тăкнă.

Анчах та Канаш, Калинино, Советски тата Сĕнтĕр районĕсенче çак ыйту çине тивĕçлипе çаврăнса пăхман-ха. Унта çак вăхăта çитсе те ферма çумĕнчи участоксенче выльăх апачĕ валли акмалли заданисене колхозсене паман.

Çывăх кунсенчех выльăх апачĕ валли акмалли заданисене кашни колхозах çитермелле, ферма çумĕнчи участоксенче ĕçлеме фермăсенчи работниксене уйăрмалла, кашни работнике уйрăм задани памалла.

Чăн малтанах, ку ĕçре ферма сывăхĕнчи çĕрсемпе, итемсемпе, ялти пушă выртакан кил вырăнĕсемпе усă курмалла. Колхозсен сад пахчисенчи йывăç хушшисене çĕрулми тата тымар-çимĕçсем акма пулать, итем вырăнĕсене силос валли тата симĕсле çитерме викăпа сĕлĕ акмалла. Ферма çумĕнчи участоксем валли çавăн пек çĕрсем çитмесен, пусуçаврăнăшĕнчи çĕр лаптăкне те касса пама пулать.

Фермăра ĕçлекенсен хăйсен участокĕсене епле те пулин ытларах тĕрлĕ тымар-çимĕç тата тырпул акма тăрăшмалла, мĕншĕн тесен çав çимĕçсем выльăхсен продуктивноçне ÿстереççĕ. Тымар-çимĕçсенчен çĕрулмипе выльăх кăшманĕ кăна мар, сахăр кăшманĕ те, турнепс та, кишĕр те, çавăн пекех кавăнпа ытти тымар-çимĕçсем те акмалла. Пăрусемпе сыснасемшĕн лайăх силос пултăр тесен, сĕлĕпе вика çине вир хушса аксан аван пулать. Уйрăмах «Краснотойденски» ятлă вире акмалла, унăн калчисем вăйлă пулаççĕ.

Сурăхсем вăхăтра ĕнесем ытларах сĕт пачăр, сыснасем лайăх ÿссе çитĕнччĕр тесен, вĕсене ешĕл апатпа тăрантармалла, çавăнпа çулла çитерме викăпа сĕлĕ тата сыснасем валли вир акмалла.

Çакăнпа пĕрлех кашни колхозăнах пахча тата тымар-çимĕç вăрлăхĕсене туса илме тăрăшмалла, ку тĕлĕшпе пахча-çимĕç бригадисен тимлĕн ĕçлемелле.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «Колхозсемпе совхозсенчи выльăх-чĕрлĕх шутне тата вĕсен продуктивноçне ÿстересси çинчен» йышăннă постановленийĕ тăрăх ферма çумĕнчи участокра планран ирттерсе туса илнĕ çимĕçсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайне ĕçкунĕ çумне хушса тÿлемелле. Ферма çумĕнчи участоксенчен туса илнĕ тымар-çимĕçсем, çĕрулми тата ытти культурăсем пĕтĕмпех фермăри выльăхсене тăрантарма çĕре каяççĕ.

Çĕрĕç органĕсемпе колхоз руководителĕсен, фермăсенче ĕçлекенсен фермăсем çумĕнчи участоксене пысăк вырăн хурса, выльăх апачĕсен базине ÿстерессишĕн тимлĕн тăрăшса ĕçлемелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 13-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 40 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 20 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ДВИНСКПА ТАРТУ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Майăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци тăшманăн **Двинск** (Латви ССР-ĕ) тата **Тарту** (Эстони ССР-ĕ) чугун çул узелĕсенче капланса тăнă çар эшелонĕсем çине тата çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Двинск-товарная чугун çул станцийĕнче пушарсем тухнă. Темиçе вăйлă взрыв пулнă, çавсем хыççăн вăйлă пушар тухнă, çăра хура тĕтĕм явăнма пуçланă. Пушар, сарăлса кайса, чугун çул узелĕн чылай пысăк пайне ярса илнĕ.

Тарту чугун çул узелĕнче 10 пушара яхăн тухнă. Поездсемпе складсем çуннă. Пушарсенче 11 взрыв пулнă, вĕсенчен пĕри питĕ вăйлă пулнă.

Пирĕн пĕр самолет хăйĕн аэродромне таврăнман.

МАЙĂН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 14-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 14 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 35 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БРЕСТ, ПОЛОЦК ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ ТАТА НАРВА ЧУГУН ÇУЛ СТАНЦИЙĔ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Майăн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиацин пысăк соединенийĕсем тăшманăн **Брест**, **Полоцк** чугун çул узелĕсенче тата **Нарва** станцийĕнче пухăнса тăнă çар эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Брест чугун çул узелĕнче 30 пушара яхăн тухнă. Пуринчен те вăйлă пушарсем Брест-Центральная чугун çул станцийĕн вăтасĕрти тата çурçĕр-хĕвеланăçпе кăнтăр-хĕвелтухăç енчи пайĕнче пулнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Пирĕн самолетсем, Брест чугун çул узелĕ çине бомбăсем пăрахнипе пĕрлех, Брест сывăхĕнчи хушăри станцисенче тăшманăн чугун çул эшелонĕсене тата шоссе çулĕсем çинчи автоколоннăсене пулеметсемпе тата тупăсемпе пенĕ.

Полоцк чугун çул узелĕнче 10 пушар тухнă. Пуринчен вăйлă пушарсем тата вăйлă взрывсем Полоцк-вторая станцийĕн районĕнче пулнă. Складсем, вагонсем тата платформăсем çуннă.

Нарва чугун çул станцийĕн районĕнче бомбăсем пăрахнипе пула тухнă пушарсенче 15 взрыв таран пулнă, вăл шутра темиçе вăйлă взрыв пулнă.

Пирĕн 2 самолет хăйсен аэродромĕсене таврăнман.

☆ ☆ ☆

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре нимĕç танкĕсем пирĕн пĕр подразделени çирĕпленсе ларнă яла атакăланă. Казанов сержантăн тупă расчечĕ хăйĕн тупине усă позици çине кăларса лартнă та пĕр-ик хут персех нимĕç танкне çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсен ытти танкĕсем каялла çаврăнса кайнă. Анчах та çур сехет иртсен, нимĕçсем каллех çав ял патне пыма хăтланнă. Казанов юлташăн расчечĕ тупăпа персе тăшманăн тата тепĕр танкне çунтарса янă.

* * *

Тирасполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман пехотипе танкĕсем темиçе хутчен пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Гитлеровецсене пĕр участокра та пирĕн оборонăн малти линийĕ патне çывăхарма паман. Совет артиллерийĕ вăйлă пенине кура, нимĕç танкĕсем каялла çавăрăна-çавăрăна кайнă, хăйсен пехотине пĕр хÿтĕсĕр хăварнă. Пирĕннисем гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем нимĕçсен 11 танкĕпе 3 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Витебск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пĕр соединенири пĕр снайперсен ушкăнĕ 3 уйăх хушшинче 148 нимĕçе персе вĕлернĕ. Снайпер Хазова юлташ çав хушăра 12 гитлеровеца, Барыкина юлташ—10 нимĕçе, Сарлыкова юлташ—9 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн Котка портĕнчи карапĕсене пырса çапнă. Бомба тÿрех пырса тивнипе тăшманăн 2.000 тонна таякан судни шыва путнă, тепĕр судни сиенленнĕ.

Нарва заливĕнче пирĕн авиаци тăшманăн хуралта çÿрекен карапĕпе катерне шыва путарнă.

* * *

Хура тинĕс флочĕн карапĕпе авиацийĕ Румыни çыранĕсем патĕнче тăшманăн пĕтĕмĕшпе 5.000 тонна таякан 2 транспортне, хăвăрт çÿрекен 3 десант баржине тата 4 катерне шыва путарнă.

* * *

Литовец партизанĕсен отрячĕ 10 кун хушшинче нимĕçсен фронталла каякан 6 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 4 паровоз, 46 вагонпа платформа çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Литовец партизанĕсен «Фашистсене вилĕм», «Жальгирис», «Ирĕке кăларакан» тата Адам Мицкевич ячĕпе тăракан отрячĕсем çав вăхăт хушшинчех тăшманăн 5 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. «Кĕрешÿ» ятлă отрядри партизансем нимĕç помещикĕн именине çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 304-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 574-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Курт Багамир çапла каласа кăтартнă: «Нимĕç салтакĕсемпе румыни салтакĕсем хушшинчи сыхăнусем кунсеренех пăсăлса пыраççĕ. Вырăссем хăваланипе Днестр лиманĕ патне çитсен, унти касă çинче румынсем хуçаланатчĕç. Нимĕç обер-лейтенанчĕ лиман урлă чи малтан нимĕç çарĕсене каçарма хăтланчĕ. Вара румынсем çапăçма пуçларĕç. Çав çапăçура вĕсем обер-лейтенанта тата 4 нимĕç салтакне вĕлерчĕç».

Нимĕçсен 522-мĕш охраннăй батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Фриц Файндель çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ фронта апрель уйăхĕн вĕçĕнче маршевăй ротăпа çитрĕм. Эпир Румыни урлă килтĕмĕр. Румынири чугун çулсем çинче ним йĕрки те çук. Пур станцисенче те вăрçă патĕнчен таракан румынсем тата аманнă салтаксем капланса тулнă. Вара эпир ирĕксĕрех Румыни çĕрĕпе виçĕ кун хушши çуран утрăмăр. Румыни халăхĕ нимĕçсене кураймасть, шыв та памасть».

* * *

Аяларах фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Винница облаçĕнчи Жмеринка районĕнчи Пултовцы ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç захватчикĕсем ялти халăха çаратса тухрĕç. Пĕтĕмпех çаратса пĕтернĕ хыççăн яла эсэсовец бандичĕсен отрячĕ килсе çитрĕ. Вĕсем ялти арçынсене 12 çултан пуçласа пурне те пĕрле пухрĕç те шоссе çулĕ çине илсе кайрĕç. Нимĕçсем çак çул çинче пурне те аялалла пăхса выртма хушрĕç, аллисене ĕнсе хыçне хума хушрĕç. Фашист ирсĕрĕсем çапла выртакан çынсене ĕнсисенчен пере-пере вĕлерчĕç. Çав кун нимĕçсем 100 çын ытла вĕлерчĕç. Вăл шутра çак старéксем: Иван Ильницкий, Федор Завируха, Козарь Квитко тата çамрăксем Виталий Спальский—14 çулта; Анатолий Войтков—14 çулта, Владимир Лаврентьев—13 çулта тата ыттисем те».

Акта çине çаксем алă пуснă: ĕççынни депутачĕсен ял совечĕн председателĕ Сомов, ялти çынсем—А. Вовальчук, А. Сорончук, Л. Стецюк, А. Войткова.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе пĕр Халăх Комиссариачĕ, пĕр промышленность работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, **Володин** юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш преми памалла тунă.

Киев хулин вырăнти промышленноçĕ продукци туса кăларас ĕçе вăйлатсах пырать

Украина столицине — Киев хулине — фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнăранпа çур çул иртрĕ. Çав вăхăт хушшинче вырăнти промышленноçăн 15 пысăк предприятийĕ тата тĕрлĕрен 150 мастерской ытла ĕçлеме пуçланă. Çак çур çул хушшинче 6 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Вырăнти промышленность ĕçне тата ытларах лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мероприятисем палăртса хунă. (ТАСС).

Акас ĕç сухалас ĕçрен юлса пымалла мар. Тăпрари нÿрлĕхе ытларах сыхласа хăварма тăрăшмалла. Агротехника хушнисене çирĕп пăхăнса пырас пулать!

Ÿкерчĕн çинче: Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ **В. А. Степанова** юлташ. Вăл ертсе пыракан колхоз акана лайăх хатĕрленсе тухнă. Паянхи кун тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсем 279 гектар акнă, икĕ кунтан тĕштырăсене пĕтĕмпех акса пĕтерет.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Планран ирттерсе тулă акаççĕ

МУРКАШ, майăн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Свердлов ячĕпе тăракан колхоз çуртырăсене акмалли плана 8 ĕç кунĕнче тултарчĕ. Кăçал кунта агротехникăллă мероприятисене тĕплĕн пурнăçласа пынă, имçампа чÿхенĕ. Ытларах сĕлĕпе тулă акнă.

— Пирĕн тулă лайăх пулать, тулă татах та акатпăр-ха, — тет колхоз председателĕ Т. Налимов. Халĕ планран ирттерсе тулă акаççĕ. Сураки вăхăтĕнче Е. Налимова, К. Ковалева, В. Блинова колхозницăсем аван ĕçлерĕç. Вĕсем кулленхи нормăна 120—150 процент тултарса пынă. Ĕçĕн пахалăхне аван тесе йышăннă.

Колхозра столовăй ĕçлет, унта ака тăвакансем кунне виçĕ хутчен апатланаççĕ.

Массăллă-ăнлантарулă ĕçе те кунта аван йĕркеленĕ. Агитаторсем уйра колхозниксемпе пĕрлех ĕçлеççĕ. Комсомолка К. Ковалева юлташ стена хаçатне йĕркеллĕ, кулленхи ĕçсемпе сыхăнтарса кăларса тăрать.

Халĕ колхозниксем çĕрулми вырăнĕсене сухалаççĕ тата каярах юлса акакан культурăсене акаççĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз ирхи тырăсене акса пĕтерне

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз майăн 6-мĕшĕнче ирхи тырăсене акса пĕтернĕ.

Çак çитĕнĕве мĕнле тунă-ха? Колхоз суракине тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Суракине тухиччен колхоз правленийĕ тĕплĕн шухăшласа производствăллă план тунă.

Туртăм вăйĕпе туллин усă кураççĕ: лашасене вăхăтра çитерсе шăвараççĕ, вăхăтра кантараççĕ.

Колхозра ĕçе сдельщина йĕркипе организациленĕ. Акара икĕ бригада, 4 звено ĕçлет, вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Кулленхи ĕçĕн итогне кăна мар, кам мĕнле ĕçленине те пĕлеççĕ. Лайăх ĕçлекен звеносемпе бригадăсене пама куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав тунă. Хĕрлĕ Ялава илессишĕн кулленех кĕрешÿ пырать. Акă 69 çулхи колхозник С. Евдокимов нормăпа пĕр гектар сухалас вырăнне 1,30—1,50 гектар сухалать.

Акас ĕçре фронтран килнĕ П. Романов тата 62 çулхи Трофим Митрофанов, 75 çулхи Иван Ефремов кулленхи задание 150—180-шар процент тултарса пыраççĕ. Кану вăхăтĕнче вулавçăсемпе агитаторсем яланах — хирте ĕçлекенсем хушшинче, республикăра тата районта тухакан хаçатсене вуласа параççĕ. Колхозниксем уйрăмах Совет Информаци бюровĕн оперативнăй сводкисене тимлĕн итлеççĕ, Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсене ĕçпе çирĕплетсе пыма тăрăшаççĕ.

Колхоз председателĕ фронтовик Павлов юлташ яланах колхозниксемпе пĕрле, уйра. Вăл ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех тÿрлетсе пырать.

Сураки вăхăтĕнче мала тухакансене премилеме колхоз правленийĕ 37 метр сатин, 9 тутăр хатĕрленĕ. Çак премисене тивĕçлĕ çынсене сураки ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн параççĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз пур агротехникăллă мероприятисене те вăхăтра туса пырать: 20 гектар кĕр калчисене апатлантарнă, тырăсене яровизацилесе тата имçампа чÿхесе акнă. Халĕ çĕрулми яровизацилес ĕç пырать.

З. СТЕПАНОВ.

10.698 гектар акнă

ЕЛЧĔК, майăн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Иртнĕ кунсенче тăтăшах çуса тăнă çумăрсем ака ĕçне чылай чăрмантарнăччĕ. Ĕнер колхозсен ухирĕсенче каллех хĕрÿ ĕçсем пуçланса кайрĕç. Майăн 13-мĕшĕ тĕлне районĕпе 10.698 гектар акнă, вĕсенчен 10.199 гектар — пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсем. 12.060 гектар ака сухи тунă. Нумай колхозсенче пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши тырăсене акса пĕтереççĕ. Кăçал агротехникăллă мероприятисене чылай колхозсенче аван пурнăçлаççĕ. 1.214 гектар çинче кĕрхи калчасене апат панă. 6.723 гектар тырра сеялкăсемпе акнă. 6.122 центнер вăрлăха яровизациленĕ, 10.532 центнер вăрлăха тĕрлĕ имçамсемпе чÿхенĕ.

Суракин малтанхи кунĕсенчех нумай колхозсенче кашни колхозник сдельщина йĕркипе ĕçлени ĕç тухăçлăхне чылай хăпартрĕ. «Сатурн» колхоз районра юлса пыракан колхозсенчен пĕриччĕ. Колхоз председателĕ Илларионов юлташ колхозри ĕçе уйрăм сдельщина йĕркипе организациленĕ хыççăн кунта халь кулленхи нормăна тултарайман пĕр колхозник та çук. «Сатурн» колхозăн лашисем вăйсăр, анчах та сухаçăсем, çÿрелекенсем вĕсене час-часах кантарнипе пула вĕсем ака çинче аванах ĕçлеççĕ. Кăç пулсан кашни бригадăрах кулленхи ĕçĕн итогĕсене пăхса тухаççĕ, ыран мĕнле ĕçлемелли çинчен канашлаççĕ. Кунта массăллă-ăнлантарулă ĕçе те аван туса пыраççĕ, боевой листоксем кашни бригадăрах тухса тăраççĕ. «Сатурн» колхоз çывăх кунсенчех пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерет.

С. МАКАРОВ.

Сухаçă-агитаторсем

ÇĔРПУ, майăн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолăн Шĕнер ялсоветĕнчи «Балтиец» колхозри пуçламĕш организацине колхоз председателĕ-фронтовик Игнатий Васильев ертсе пырать.

Организацинче пурĕ 9 комсомолец. Вĕсем пурте сураки ĕçне активлăн хутшăннă. Уя ир-ирех тухса, сĕм тĕттĕм пуличчен ĕçлесе, ыттисене пример панă. Мария Тимофеева, Анатолий Константинов комсомолец-сухаçăсем кулленхи нормăна 135—150-шар процент тултарса ĕçлерĕç. Çапла вĕсем кунсерен 3,37-шер ĕçкунĕ тунă.

Комсомолец-сухаçăсем, çÿреçĕсем тата акаçăсем агитациллĕ-массăллă ĕçе те тивĕçлипе туса пычĕç. Вĕсен пуçарăвĕпе колхозра кăтарту хăми тата юлашки хыпарсен хăми тунă. Колхозра 8 номер стена хаçачĕ, бригадăсенче 8 номер боевой листок кăларнă. Колхозниксене кашни кунах хаçатсем çинчен Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе фронтри эпизодсене вуласа панă. Ытти районсенчи колхозниксен ĕçĕсемпе паллаштарнă.

Сураки ĕçне хастарлăн туса пынипе пула, колхоз майăн 12-мĕшне тĕштырăсене акса пĕтерчĕ.

А. ФЕДОРОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Колхозниксем хирте, председатель ĕçкĕре

Уяр çанталăк тăпрана хăвăрт типĕтет. Тăпрари нÿрлĕхе ытларах сыхласа хăварас тесе, районри малта пыракан колхозсем хĕрсех сураки тăваççĕ. Анчах Шатракассинчи «Родина» колхозра уйхир ĕçĕсем питех те сÿрĕк пыраççĕ-ха.

Ку колхоз суракине майăн малтанхи кунĕсенчех пуçăннă. Икĕ эрне хушшинче те 132 гектар çеç сухаланă, 72 гектарне кăна акнă. Çав шутра 3 гектарне кăна сеялкăпа акнă. Колхозăн пурĕ 216 гектар акса хăвармалла.

Кăçалхи сураки — малта тăракан агротехникăна пурнăçа кĕртмелли сураки. Анчах «Родина» колхозра агротехникăпа кашни утăмрах пăсаççĕ. Уя тислĕк кăлармалли плана пурнăçламан. Кăларнă тислĕке те хире сарса тухман. Сухаласа, акса кайнă участоксем çинче тислĕк куписем çаплипех выртаççĕ.

Кунта тата «ĕçе хăвăртлатмалли» уй тупнă. Кĕрхи çĕртме тунă лаптăксене сухаласа «чăрманмаççĕ», тÿрех акаççĕ. Çакăн пек вĕсем уйрăмах вăрман енче, çын курман çĕрте акаççĕ. Унта сухаламан çĕр çине темиçе гектар акнă.

Эпир колхозăн хирĕнче те, фермăра та, тимĕрçĕ лаççи патĕнче те пултăмăр. Анчах председательпе тĕл пулаймарăмăр. ...Пĕр вăтă мучи иртсе пырать. Эпир ăна вăхăтлăха чартăмăр.

— Касарăр та, — тетпĕр. — ăçта-ши сирĕн председатель?

Мучи пирĕн калаçăва кăмăлласах хутшăнчĕ. Анчах вăл та пĕлмест иккен:

— Темле, пирĕн председателе тупайратăр-и вара? Куçа курăнмасть вăл...

Чăн та председателĕпе кăнтăрла тĕл пулса пулмарĕ. Кăç пулас умĕн çеç:

— Авă килет вăл, — терĕç правленири çынсем.

Урампа пĕр çын сулкаланать. Енчен-енне сирпĕнет. Чиперех пырать-пырать те çĕре персе анать, унтан каллех ура çине тăрать те малалла талпăнать.

Ку вăл — «Родина» колхоз председателĕ Кирилл Дублев.

— Çак хĕрÿ вăхăтра епле ĕçкĕре çÿреме хăятăр-ха эсир, председатель юлташ, — ыйтатпăр эпир.

Вăл, пĕр именсе тăмасăрах, нимĕн те пулман пек:

— Ĕçес пулать, ĕçсен ĕç те тухать, — тесе сÿпĕлтетет.

Дублев ĕçет. Колхоза ертсе пыма суйласа лартнăранпа çулталăк иртнĕ. Колхозниксем систернĕ тăрăх, председателе кĕнĕрепле вăл ĕçмесĕр пĕр кун та ирттермен.

Председатель ĕçке ярăнни тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозниксене чăнах та кÿрентерет. Колхозра ĕç дисциплини çук. Çавна пула нумай колхозниксем ĕçе хутшăнмаççĕ. Кашни бригадăра ĕçлеме пултаракансем 50—60 çынтан та кая мар. Анчах ĕçе 10—15 çын çеç тухаççĕ: е килти ĕçе тăваççĕ, е пасартан-пасара çÿресе ирттереççĕ.

Иртнĕ пасар кунĕ ушкăн-ушкăнпа Сĕнтĕр пасарне утнине эпир хамăрах куртăмăр. Вĕсене бригадирсем те курчĕç, анчах шарламасăр ирттерсе ячĕç. Колхозра агитациллĕ-массăллă ĕç çук. Хаçат витринисем пур, анчах вĕсем çине хаçатсем çыпăçтарман. Социализмлă ăмăрту йăлара мар. Ялта коммунистсем те пур ĕнтĕ, анчах вĕсем те агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелеме тăрăшмаççĕ.

Хальхи кунсен ответлăхне туйса илсе, тÿрĕ кăмăллă колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем фронтпа çĕршыв валли тырпул ытларах туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Анчах вăйлă тырпулшăн кĕрешме мĕнпур колхозниксене çĕклемен-ха. Çавна пула сураки калама çук вăраха тăсăлса пырать. Дублев ĕçсе çÿрени çинчен те, сураки мĕншĕн вăраха юлса пыни çинчен те районри организацисем пĕлеççĕ. Анчах вĕсем мĕне кĕтсе пурăнаççĕ-ши?

СĔНТĔР.

И. ИВАНОВ,
Н. ПЕТРОВА.
(«Чăваш Коммуни» хаçатăн корреспонденчĕсем).

СТЕНА ХАÇАЧĔ ĔÇРЕ ПУЛĂШАТЬ

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхозра комсомолецсем эрнере пĕрре «Вăйлă тырпулшăн» ятлă стена хаçачĕ (редакторĕ Т. Степанов) кăларса тăраççĕ. Хаçат колхозри паха ĕç опычĕсемпе çитменлĕхсене лайăх çутатса çырать. Кăçал пĕтĕмпе 12 номер тухнă ĕнтĕ.

Е. Иванова, Т. Шорникова тата Д. Димитриев сухаçăсем икĕ касăллă плугпа куллен 1,30 гектар сухалас вырăнне 2—3-шер гектар сухаланă. Стена хаçачĕ вĕсен опытне кăтартса парсан, ытти колхозниксем те вĕсенчен пример илсе лайăхрах ĕçлеме пуçланă. Колхоз амбарĕсене хураллакан Е. Савельевăпа А. Ефимова колхозницăсем хурал тăма хăшпĕр касхине 10 е 1/2 сехетре çеç тухнă пулнă. Стена хаçачĕ вĕсен ĕçне критиклесе, вăрçă вăхăтĕнче колхоз тырпулне вăрласран е çунса каясран уйрăмах çирĕп сыхлама кирли çинчен ăнлантарса çырнă. Çакăн хыççăн дисциплина çирĕпленнĕ.

Стена хаçатĕнче «Хисеп хăми» тунă. Унта суракинче фронтри пек ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсен ячĕсене палăртаççĕ.

Т. Степанов, П. Михайлов, К. Игнатьева тата А. Михайлова комсомолецсем, стена хаçачĕ кăларнисĕр пуçне, колхозниксемпе колхозницăсене çĕнĕ хаçатсем вуласа, ăнлантарса параççĕ, ытти районсенчи колхозсен ĕçĕсемпе паллаштараççĕ.

Б. ШОРНИКОВ

Колхозниксем çĕрулми кивçен параççĕ

ÇĔРПУ. Кăшаркассинчи «Пионер» колхозăн çĕрулми вăрлăхĕ çитместчĕ. Колхозниксем хăйсен запасĕнчен пĕр кун хушшинче 90 пăт пухрĕç. Çак ĕçе колхоз 2 бригадирĕ Александра Яковлева пуçарчĕ. Вăл хăй чăн малтан 5 пăт пачĕ. Халĕ колхозăн çĕрулми çителĕклĕ, ăна яровизацилеме хывнă.

Л. ВЛАДИМИРОВ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Шупашкарти ирĕклĕ пушар обществин уйрăмах лайăх ĕçлекен членĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Пушарсене сӳнтерес тĕлĕшпе айăçлă ĕçленĕшĕн тата пушарсем тухасран сыхланмалли ĕçсене халăх хушшинче сарас тĕлĕшпе пуçарулăх пулнăшăн Шупашкарти ирĕклĕ пушар обществин хăйсене уйрăмах палăртнă çак членĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Василий Михайлович Зарубина.
2. Константин Павлович Китаева.
3. Алексей Иванович Мочалова.
4. Петр Яковлевич Нефедова.
5. Ананий Григорьевич Савельева.
6. Игнатий Васильевич Шумилова.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ

Шупашкар хули, 1944 çулхи майăн 10-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммуни" 85-мĕш, 92-мĕш, 94-мĕш тата 95-мĕш номерĕсенче).

КУСЛАВККА РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

4. Ермолай Степанович **Дубровские**—«Труд» колхозăн пчеловодне.
5. Ольга Петровна **Елехинăна** — «Красный Волгарь» колхозăн сурăх пăхаканне.
6. Матвей Никитич **Елкова**—машинно-тракторнăй станцин трактористне.
7. Спиридон Ефремович **Ефремова** — «Динамо» колхозăн председательне.
8. Николай Алексеевич **Жолобова** — «Красный Курган» колхозăн председательне.
9. Иван Егорович **Зуева** — «Заря» колхозăн садоводне.
10. Клавдия Ивановна **Ивановăна** — «Динамо» колхозăн дояркине.
11. Степан Андреевич **Киселева** — Андреев ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.
12. Анна Ивановна **Казмодемьянскиана** — «Красный Волгарь» колхозăн ферма заведующине.
13. Григорий Михайлович **Крючкова**—ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
14. Ефросиния Алексеевна **Кудряшовăна** — «Спартак» колхозăн ферма заведующине.
15. Аркадий Никитич **Кудякова** — «XVI партсъезд» колхозăн председательне.
16. Иван Максимович **Кузнецова** — «Коммунист» колхозăн колхозникне.
17. Александр Лаврентьевич **Лаврентьева** — машинно-тракторнăй станцин директорне.
18. Елизавета Кирилловна **Матвеевăна** —«Динамо» колхозăн колхозницине.
19. Куприян Матвеевич **Матвеева** — «Канаш» колхозăн председательне.
20. Владимир Яковлевич **Морозова** — «Путь Маркса» колхозăн председательне.
21. Ангелина Федоровна **Орьялкинăна** —«Путь Маркса» колхозăн ферма заведующине.
22. Николай Петрович **Петрова** — «III Интернационал» колхозăн председательне.
23. Иван Иванович **Петрухина**—«Моряк» колхозăн председательне.
24. Игнатий Сергеевич **Пушкова** — Л. М. Каганович ячĕпе тăракан колхозăн старши конюхне.
25. Елена Николаевна **Сергеевана** — «1-ое Мая» колхозăн колхозницине.
26. Осип Матвеевич **Симакова**—«Коммунист» колхозăн председательне.
27. Иван Степанович **Федерова** — «Красная заря» колхозăн председательне.
28. Мария Петровна **Хорьковăна** — «Спартак» колхозăн пăру пăхаканне.
29. Мария Степановна **Яковлевăна** — «Путь Маркса» колхозăн дояркине.

(Малалли пулать).

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем çине ытларах çавăрăнса пăхмалла

ВĂРНАР. Районра ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕн решенийĕсене сӳтсе-явăççĕ. Çак кунсенче комсомолăн Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕнчи организацийĕ, пленум решенийĕсемпе тĕплĕн паллашса, шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçне урăхлатса çĕнетме кирлĕ мероприятисене палăртрĕ.

Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕнчи комсомол организацийĕ кăçалхи вĕренӳ çулĕнче сахал мар паха ĕçсем турĕ. Ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырассине ӳстерчĕ. Комсомолецсем тăрăшса вĕренес, харпăрхăй тавракурăмне ӳстерес ĕçре пур майсемпе те усă курнă. В. Григорьев, О. Иванова, Н. Илларионова, П. Васильев комсомолецсем аван вĕренсе пыраççĕ.

Кунта кĕнекепе ĕçлесси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхнă. Шкулăн хăйĕн библиотека пур. Унта тĕрлĕ ыйтусемпе паха кĕнекесем тупса вулама пулать. Комсомол организацийĕ пуçарнипе, çав хаклă фонда типтерлĕн упрама тăрăшаççĕ. Кĕнекесен çийĕсене хураççĕ, юсаççĕ. Вулакансен йышĕ, иртнĕ çулсенчипе танлаштарсан, нумай ӳсрĕ. Шкул дирекцийĕ тăрăшнипе кăçалхи çул ачасем валли çĕнĕ кĕнекесем илсе килсе сутассине аван йĕркеленĕ. Шкулти киоск урлă иккĕмĕш чĕрĕкре кăна 1.327 экземпляр ытла тĕрлĕрен литература сутăннă. Халĕ кашни комсомолецăн килĕнче хăйĕн библиотека пур.

Вĕренекенсем пушă вăхăта яланах усăллă ирттереççĕ. Шкулта ачасен художествăллă пултарулăхне палăртасси аплăн саралса кайнă. Ку ĕçре учитель-комсомолецсем пысăк пулăшу параççĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах директор çирĕплетнĕ план тăрăх вечерсем, докладсем, концертсем йĕркеллĕн пулса пыраççĕ. Ф. Александрова юлташ ертсе пыракан хор тата Ф. Кроликовăн спорт коллективĕ пĕрре кăна мар çывăхри колхозсене тухса çӳренĕ. Комсомолка-вĕренекен П. Сергеева юлташ ертсе пыракан драмкружок кăçал А. Кăлкан, П. Осипов, Ф. Павлов, Никитин çырнă пьесăсене лартса панă.

Комсомолецсем пуçарнипе художествăллă пултарулăх смотрĕ кунта уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартнă. Смотра шкулти 7 коллектив (271 ача), ялти 4 коллектив хутшăннă. Вĕсене пурне те комсомолецучительсемпе вĕренекенсем йĕркелесе пынă.

Шкулта литература кружокĕ аван ĕçлет. 10-мĕш класра вĕренекен комсомолец В. Григорьев ертсе пынипе ачасем алăпа çырса «Тăванăмсем», «Пирĕн утăм» сборниксем кăларнă. 4.000 куплет ытла фольклор пухнă. Кружок членĕсем пĕлĕве ӳстерес тĕлĕшпе тимлĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Кăçал, çапла вара, К. В. Иванов, Сеçпĕл Мишши творчествисене тата Аркадий Эсхель çырнă «Ăмăрткайăк» поэмăна тишкерсе тухнă.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче тăван çĕршывăн иртнĕ тата халъхи пурнăçĕпе кĕрешӳĕ çинчен вĕренесси лайăх пулса пырать. «Аслă вырăс çĕрĕн полководецĕсене — мухтав!» тата «Отечественнăй аслă вăрçă геройĕсене—мухтав!» ятлă пысăк выставкăсем тунă. Вĕренекенсем хушшинче Александр Суворов, Мининпа Пожарский, Чапаев тата Сталин çинчен докладсем ирттернĕ. Кашни ирех ачасене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе Верховный Главнокомандующин приказĕсене ăнлантарса параççĕ. Çак ĕçсене комсомолецсем пуçарса пыраççĕ.

Анчах комсомолпа пионер организацийĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Уйрăмăнах шкул ачисене çар ĕçне, физкультурăпа спорт ĕçне вĕрентес тата пионер отрячĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе нумай тăрăшса ĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе вара ВЛКСМ райкомĕпе райсутĕç пайĕ кирлĕ пек ертсе пымасси çинчен уççăнах калас пулать. Райсутĕç пайĕнчи юлташсем Кĕçĕн Кипек шкулне кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пĕтĕмпе те виçĕ хутчен çеç çитнĕ, ВЛКСМ райкомĕнчен 5 хутчен кăна пынă. Калас пулать, çак «çулçӳренсем» те тӳррĕмĕнех комсомол е шкул ыйтăвĕсемпе мар, хуçалăхпа политикăллă кампанисене ирттерме яла уполномоченнăйсем пулса пынăран кăна кĕрсе тухнă.

Комсомолецсем художествăллă пултарулăх смотрне районра пуринчен те активлăнрах хутшăннă. Анчах районри руководительсем çак коллективсен ĕçĕпе интересленме те шутламан. Райсутĕç пайĕн политпросвет учрежденийĕсем енĕпе ĕçлекен инспекторĕ Платонова юлташ ку вăхăтра хăй кабинетĕнче ларсах вăхăта ирттернĕ. Вăл халĕ те шкулсенчи ку тĕлĕшпе ĕçлекен паха коллективсене пĕлмест-ха.

ВЛКСМ райкомĕн комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен ĕçне вăйлатассишĕн, комсомол йышне ӳстерессишĕн, пионерсен ĕçне лайăхлатассишĕн çине тăрса ĕçлемелле

С. СЕЛЕЗНЕВ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

Ӳкерчĕк çинче: Пирĕн земляк — капитан Афанасий Лазаревич **Лазарев**.

Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре — Орел хули патĕнчи çапăçусенче паттăрлăхпа хаюлăх кăтартнăшăн Лазарев юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

А. Л. Лазарев юлташ Етĕрне районĕнчи Орапакассинче çуралса ӳснĕ. Вăрçа кайиччен вăл Шупашкарта Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Переселенчески отдел пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Фашистсене вилĕм!

Тăван çĕршыв Аслă вăрçинче
Хĕрлĕ Çар хĕрӳллĕн çĕнтерет.
Çăткăн фашистсене çĕр çинчен
Çăва тĕпне çапса тӳнтерет.

Чечеклĕ Украина хирĕсенче
Тăшмана тĕппипех аркатрĕ.
Хĕвеллĕ Крымăн чаплă çĕрне
Вăрă-хурахсенчен тасатрĕ.

Геройсен хули—Севастополь
Гитлер шайккисенчен тасалчĕ.
Тинĕссен тĕпĕсене путса,
Сĕршер-пиншер фрицсем пăчланчĕç.

Гитлеризм юнсăр пурăнаймасть,
Фашизм куççульсĕр тăраймасть·
Фашистсене — вилĕм! Пĕтчĕр вĕсем,
Путсĕр илĕм-тилĕм сĕмсĕрсем!

Н. Й. ШЕЛЕПИ,
Чăваш халăх поэчĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Ачасен çуллахи канăвне организацилесси

ВЦСПС президиумĕ йышăннă тăрăх, 1944 çулта çулла профсоюз организацийĕсем пионер лагерĕсене тата сыватакан площадкăсене 1.100.000 ачана яраççĕ. Ахаль йышши пионер лагерĕсене 700.000 ача валли тăваççĕ, вĕсенче виçĕ эрне пурăнмалла. Санатори йышши лагерьсене тата сыватакан площадкăсене 400.000 ачана яраççĕ. Ачасене сыватмалли çуллахи учрежденисем июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ĕçлеме тытăнаççĕ.

Арçын ачасемпе хĕрачасене пионер лагерĕсене уйрăм яраççĕ, арçын ачасене— пĕр сменăра, хĕрачасене — теплĕр сменăра. Пионер лагерĕсенче арçын ачасем пурăннă чухне вĕсем хушшинче вăрçăпа физкультура тĕлĕшпе ытларах ĕçлеççĕ. Ахаль йышши лагерьсене тата сыватакан площадкăсене 13 çултан иртмен шкул ачисене яраççĕ, санатори йышши лагерьсене 7 çултан пуçласа 13 çула çитнĕ ачасене яраççĕ. Путевкăсене пуринчен малтан фронтовиксен тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен ачисене параççĕ.

XIII-мĕш шахмат ăмăртăвĕ

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт Комитечĕ Пĕтĕм Союзĕпе мала тухмалли XIII-мĕш шахмат ăмăртăвне ирттермелли плана тата ăмăртăва хутшăнтармалли çынсене çирĕплетнĕ.

1944 çулта шахмат тĕлĕшпе СССР чемпионĕн ятне илессишĕн 18 çын кĕрешет: пирĕн çĕршывăн 1941 çулхи абсолютнăй чемпионĕ СССР гроссмейстерĕ Ботвинник, СССР гроссмейстерĕсем Котов, Лилиенталь, Смыслов тата Флор (вĕсене пурне те ăмăртăва ятран чĕнсе илеççĕ), Мускаври, Бакури тата Омскри çурма финалсенче çĕнтернисем—спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕсем Макогонов тата Романовский, мастерсем Алаторцев, Болеславский, Бронштейн, Вересов, Лисицын, Микенас, Равинский, Рагозин, Сокольский, Хавин тата Толуш

Ăмăртăва Мускавра ирттереççĕ. Пĕррешĕ тур майăн 21-мĕшĕнче пулать. Ăмăртăвăн тĕп судьи пулма Зубарев маслаштарнă. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Гитлерла Германипе пĕр каварлă государствăсене юлашки хут асăрхаттарни

СОВЕТ СОЮЗĔН, ВЕЛИКОБРИТАНИН ТАТА ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ПРАВИТЕЛЬСТВИСЕМ ПĔЛТЕРНИ ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн, Великобританин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем гитлерла Германипе пĕр каварлă государствăсене пĕлтерни çинчен «Ньюс кроникл» хаçатăн дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла çырать: «Сталин хăйĕн май уйăхĕн пĕрремĕшĕнчи кăларнă приказĕнче «Румынин, Венгрин, Финляндин тата Болгарин хăйсем пĕтсе ларассинчен хăтăлса юлма пĕр май çеç пур: вĕсен нимĕçсемпе çыхăну тытма тата вăрçма пăрахмалла», тесе асăрхаттарнăччĕ; çавăн хыççăн вара вĕсене правительствăсем асăрхаттарчĕç». Сталин та, правительствăсем те пуринчен малтан Германи союзникĕсен правительствисене мар, вĕсен халăхĕсене каланă.

И. В. Сталин юлташ приказра çапла каланăччĕ: «Анчах та çав çĕршывсен халъхи правительствисем нимĕçсемпе çыхăну тытма пăрахĕç тесе шанма йывăр», «Хăйсене нимĕç пусмăрлăхĕнчен хăтарас ĕçе çав çĕршывсенчи халăхсен хăйсен аллине илмелле пулать», тенĕччĕ. Çав сăмахсем çинчен хаçат обозревателĕ çапла çырать: «Правительствăсем пĕрле пĕлтерни Англипе Америка правительствисем Совет Союзĕн шухăшне йышăннине кăтартать».

АФИ агентствин обозревателĕ каланă тăрăх, СССР, Англи тата Америка Германипе пĕр каварлă государствăсене пĕрле чĕнсе каланине çапла хаклаççĕ: вăл «нимĕç çарĕсене Европăри пур территорисенчен те хăваласа кăлармалли операцисене тăвас умĕн калани пулать», теççĕ.

Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла çырать: «Союзлă виçĕ тĕп держава Германипе пĕр каварлă государствăсене асăрхаттарни пысăк япалана пĕлтерет. Вăл çав государствăсем пирки сирсе яма çук приговор йышăнать, анчах та вăл халь вăрçма пăрахакан государствăсем тĕлĕшпе çав приговора çемçетме пурри çинчен калать. Правительствăсем асăрхаттарнине Германи союзникĕсем те пĕлсе тăракан событисем пуçланас умĕн пичетлесе кăларнă.

Финляндие (унпа США вăрçмасть) тата Болгарие (унпа Совет Российĕ вăрçмасть) çав судно çинех, тĕрĕссипе каласан, çав путакан карап çинех Венгрипе тата Румынипе пĕрле вырнаçтарнă».

НЬЮ-ЙОРК, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио обозревателĕ çапла каланă: Совет Союзĕн, Великобританин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисен Германипе пĕр каварлă государствăсене асăрхаттаракан заявленийĕ «Германие тата унпа пĕр каварлисене хаярран пырса çапма хатĕрленнине систерет. США, Великобритани тата Совет Союзĕ асăрхаттарнă государствăсем Германин шанчăксăр та пĕтерсе лартмалли политикине малашне те пулăшса тăрĕç-и, е унтан пăрăнса кайĕç-и, — çак ыйтăва вĕсен татса памалли вăхăт çитрĕ ĕнтĕ»

Александер генералăн приказĕ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи спецкорĕ çапла пĕлтерет: паян Александер генерал Италире çĕнĕ наступлени пуçласа янă май çарсене приказ панă.

Приказра союзниксен Италири фронтри çарĕсен рольне кăтартса панă, «Кунти çарсене пĕтĕм тĕнче ырлать, вĕсене пирĕн вырăс союзниксем тав тăваççĕ», — тенĕ.

Малалла приказра çапла каланă: «Союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсем халъхи вăхăтра тинĕсре, çĕр çинче тата сывлăшра та, татăклăн çапăçса, тăшмана ĕмĕрлĕхех аркатса тăкма хатĕрленсе çитеççĕ. Тăшмана хĕвеланăçĕпе хĕвелтухăçĕнчен те, сурçĕрпе кăнтăртан та пырса çапма вăйсем пухăнса çитеççĕ. Çавсем пырса çапса, нацистсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе пăрахмалла. Вара Европăра халăх ирĕклĕх пулса тăрĕ, пирĕншĕн пурнăçа мирлĕ пурнăç çитĕ. Пире, Италире тăракан çарсене, пысăк чыс тиврĕ, тăшмана малтан пирĕн пырса çапмалла пулчĕ. Эпир нимĕçсен Италири çарĕсене çĕмĕрсе тăкма хатĕр».

Çапăçу йывăр, хаяр тата, тен, вăрăма тăсăлĕ », — тенĕ Александер генерал. Унтан вăл çапла каланă: наступлени тăвакан çарсене авиаци пулăшса пырĕ, «пирĕн авиаци тăшман авиацийĕнчен нумай вăйлă», çавăн пекех тата артиллерипе танксем пулăшса пырĕç, «пирĕн вĕсем те нимĕç хатĕрĕсенчен темĕн чухлĕ ытларах», — тенĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕ тата акăлчансен 8-мĕш армийĕ Густав лини çине наступлени туса пыраççĕ. Майăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çапăçусем тăшманăн боевой охранени тăрăхĕнче пуçланса кайнă. Халъхи вăхăтра наступлени фрончĕн пĕтĕм тăрăхĕпех йывăр çапăçусем пыраççĕ.

Ĕнер союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен пиллĕк пысăк вăйĕсем çурçĕр тата çурçĕр-хĕвеланăç Италири портсемпе чугун çул узелĕсене нумайĕшне тапăннă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 2.750 вĕçев ытла тунă.

ЛОНДОН, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен Густав линийĕ çине поступлени туса пыракан çарĕсем çаплах малалла куçса пынă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чăçĕсем Лири шывĕ хĕррипчи улăхра тăшман оборони ăшне кĕрсе кайнă, нумай тĕлте тăшман питĕ вăйлă хирĕç тăнине çĕмĕрнĕ, наступленин малтанхи кунĕсенче иртсе кайнă çирĕплетнĕ пунктсене тăшмантан тасатнă. Американецсен 5-мĕш армине кĕрекен француз çарĕсем таврари çӳллĕ вырăнти—Монте Майо тăвĕ çинчи тăшман оборонин паха позицийĕсене тытса илнĕ те ăнăçăва хăвăрт вăйлатса янă. Французсен пехотипе танкĕсем, тусем хушшипе малалла кайса, çӳнĕрен çӳллĕ вырăнсем тытса илнĕ, Сан-Амброзио, Валле-Майо тата Аузония ялĕсене йышăннă. Çапла вара «Густав линине» чылай пысăк участокра татнă. Тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕсенчен иртсе кайнă, халь вĕсене тăшман çарĕсенчен тасатса пыраççĕ. Американецсен çарĕсем те малалла куçнă, вĕсем Аузонипе Формия хушшинчи çула татнă. Нумай çынна тыткăна илнĕ, тăшмана пысăк çухатусем тӳстернĕ. Пĕтĕм фрончĕпех хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири объекчĕсене, артиллери позицийĕсене тата фронт тăрăхĕнче капланнă çарсене, çавăн пекех тата тăшманăн Югослави çыранĕнчи çулĕсене тапăннă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ОСНАБРЮКПА ШТЕТТИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 12-мĕшĕнче американецсен 8-мĕш авиаци корпусĕнче тăракан бомбардировщиксен питĕ пысăк соединенийĕсем Германири Лейпциг хули районĕнчи синтетически горючин 4 пысăк складне тата Чехословакири пĕр завода тапăннă.

ЛОНДОН, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсем Оснабрюкри (Германи) сортировка станцине тапăннă. Самолет çинчен ӳкерсе илнĕ фотоӳкерчĕк кăтартнă тăрăх, çав тапăнăва пула вăйлă взрыв пулнă. Вагонсен составĕ тата чугун çул линийĕсем вăйлă сиенленнĕ. Çавăн пекех тата «Клэкнерверке» ятлă металлурги завочĕ çине те бомбăсем пăрахнă.

Авиацин ытти соединенийĕсем Штеттин çывăхĕнчи Тутоври (Германи) «Фокке—Вульф» фирмăн самолетсем пухакан завочĕ çине бомбăсем пăрахнă. Заводăн самолетсем пухакан 3 пысăк цехне бомбăсем тӳрех пырса тивни паллă пулнă.

Штеттин хулинчи «Вулканверке» верфĕ çине тата металлурги завочĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Ĕнер ирхине тата майăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен бомбардировщикĕсен хăватлă соединенийĕсем тăшманăн Бельгири тата Сурçĕр Францири аэродромĕсемпе чугун çул объекчĕсене тапăннă.

КАРЕЛИ ФРОНТĔНЧЕ АВСТРИ САЛТАКĔСЕН БАТАЛЬОНĔ ПĂЛХАННА

СТОКГОЛЬМ, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Стокгольмс тидниген» хаçат çапла пĕлтерет: кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Карели фронтĕнче австриецсен альпийски çарĕсен пĕр батальонĕ пăлханнă. Польшăран нумаях пулмасть пынă нимĕçсен чăçĕ, Дитль генерал приказĕ тăрăх, çав батальонпа икĕ кун хушши çапăçнă, вара пăлхава пусарнă. Австриецсене çĕр çынна яхăн вĕлернĕ е амантнă. Ыттисене арестленĕ те Банака лагерĕнчи концентрациллĕ лагере, çавăн пекех тата Киркинесри лагере хупса лартнă. Вĕсене Германие яраççĕ, вара унта вĕсене çар сучĕ суд тумалла.

Редакцине килнĕ çырусем

Колхозниксен сăмахне шута хумасть

Сĕнтĕр районĕнчи «Броневик» колхоз иртнĕ çул 80 тонна силос хывнăччĕ. Ăна хĕллех, выльăх апачĕ çитмен пиртĕ йывăр вăхăтра, усăмаллаччĕ, халĕ те усман.

— Силоса çитересчĕ, выльăхсем начарланчĕç, — тетчĕç колхозниксем. Колхоз председателĕ Игнатьев колхозниксен сăмахне шута илмерĕ. Хĕлле выльăхсем нумай чакрĕç: 80 сурăхран майăн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 29 пуç кăна юлчĕ.

«Броневик» колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çине çиелтен пăхаççĕ. Иртнĕ çул 6 кĕсрене чуптарса хăварнăччĕ, хĕл каçиччен 5 лаша хăм пăрахрĕç. Хăм пăрахнăшăн никам та ответ тытман, Игнатьев çак ĕç çине çаврăнса та пăхман. Çакăн çинчен асăрхаттарсан, Игнатьев: «пирĕн ĕç çук, — тесе ответлет тата хăратма пăхать.

Лашасене чуптармалли вăхăт çитрĕ, кун пирки никам та нимĕн те тумасть.

Анчах çак пысăк ĕçе халех тытăнмалла. Выльăх ĕрчетессипе малалла ăнăçлăн туса пырас тесен, фермăсен çумĕнчи участоксене тумалла.

Г. КУДИКОВ.

Ялхуçалăх артелĕн уставне пăсма чармалла

ИШЛЕЙ. Чăрăшкассинчи «XX лет Чувашии» колхозра ялхуçалăх уставне тăтăшах пăсаççĕ. Колхоз кооперации урлă государствăна 420 пăт тырă сутнă. Çакăншăн илнĕ промтовара ăста хăни колхозниксене паллă мар. Колхоз счетоводне Бардасовăна илнĕ, ăна кашни уйăхрах 56 килограмм тырă параççĕ. Колхозник Григорий Москеев çăм арманĕнче ĕçлет, ăна ĕçкунĕ мар, 100 килограмм тырă панă. Колхозра инвентаризаци туман. Ĕç кунĕсене вăхăтра çырса пымаççĕ.

Çак çитменлĕхсене районри çĕрĕç пайĕ пĕлет, анчах нимĕн те шарламасть.

Г. ХЛЕБНИКОВ

СУД

Государство пурлăхне салатнăшăн

Елчĕк райпотребсоюзĕн склачĕн заведующийĕ Матвей Никитин халăха сутмалли таварсене хăйне çывăх çынсене салатса пурăннă. Юлашки вăхăтра вăл кооперации урлă сутмалли таварсене—198,4 метр пусма-тавара, пуçа çыхмалли 60 тутăра—складран тӳрех салатнă. Çак таварсен чылай пысăк пайĕ колхозниксене государствăна тырă сутнăшăн памалли пусма-таварсем пулнă. Çапла кирревсĕрленсе Никитин çу заводĕнче техничка пулса ĕçлекен Осипова Марийăна кăна 150 метр ытла пусма, 36 тутăр, 12 питшăлли, 12 мăшăр чăлха панă. Никитин час-часах ĕçкĕре пулса ашкăнса çӳренĕ.

Нумаях пулмасть çак ĕçе Елчĕк районĕнчи халăх сучĕ пăхса тухрĕ. Государствăн пурлăхне салатнăшăн халăх сучĕ Уголовнăй кодексăн 109-мĕш статьипе тата 116-мĕш статьин 2-мĕш пайĕпе айăпласа, райпотребсоюз склачĕн заведующийĕ пулнă Никитина 10 çул хушши тĕрмере хупса усрамалла турĕ. Складран таварсем илсе тăнă М. Осиповăна Уголовнăй кодексăн 167-мĕш статьин 2-мĕш пайĕпе айăпласа, 3 çул хушши тĕрмере хупса усрамалла, складран илнĕ пĕтĕм тавара конфискацилемелле турĕ.

Итлеме пынă çынсем халăх сучĕн приговорне ырларĕç.

И. ПЕТРОВ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкарти пир-авăр техникумĕ вĕренме йышăнать.

Пĕрремĕш курса вăтам шкулăн 7—8-мĕш класĕсенче вĕренсе тухнисене, иккĕмĕш курса — 9 — 10-мĕш классенчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Техникумра техникума кĕме хатĕрлекен курс уçнă, унта укçасăрах вĕрентеççĕ. Çав курса вăтам шкулăн 6—7-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене илеççĕ.

Курс май уйăхĕнче ĕçлеме тытăнать.

Заявленисене техникум çуртĕнче кулен (канмалли кунсемсĕр пуçне) 16 сехетрен пуçласа 22 сехетчен илеççĕ.

Техникум адресĕ: гор. Чебоксары, Новая ул., 22. (Женская школа № 2). Телефон — 6—86. 2—2

„Госснабсбыт" Чăваш республикинчи отделенине главнăй бухгалтер кирлĕ. Хватер параççĕ. Çак адреспа ыйтмалла: г. Чебоксары, Красная площадь, 19, Госснабсбыт 2—2

Çыхăну Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи Управленине васкавлăн машинистка кирлĕ.
Адрес: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 1, 3-й этаж, ком. № 14, Отдел кадров. Тел. 0—52.

Чăваш АССР Наркомземне ялан ĕçлеме инженер-механик, çăгăх авăртас ĕçĕн инженерĕ, инженер-гидротехник, инженер-строитель тата главнăй бухгалтер кирлĕ. Çак адреспа ыйтмалла: Наркомзем, Отдел кадров.

Ялан ĕçлеме бухгалтер кирлĕ. Хватер параççĕ. Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары. Ул. Ворошилова, 46, Весорез завод.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ЛТ 09614 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.